Çур аки иртнипе хирте ĕç вĕçленмест

Умра – тухăçшăн малалла кĕрешесси

Çанталăк условийĕсене кура кăçал çур аки ытти çулхисенчен маларах иртрĕ. Район пĕтĕмпе 9 пин ытла гектар çуртрисем, пиншер ытла гектар пĕр çул ўсекен курăксем акрĕ, çĕр улми лартрĕ тата ытти те. Маларах акнă хирсем ешĕл кавирпе хупланчĕç те. Анчах акни-лартнипе кăна кĕлете тыр-пул кĕртеймĕн. Çĕр ĕçченĕн практикинче акса-лартса хăварнине тĕрĕстĕкел пăхса çитĕнтересси тĕп вырăн йышăнать. Çавăнпа та паянхи калаçава эпир «Россельхозцентр» ФГУн Муркаш районĕнчи филиалĕн пуçлăхне В.П. МОРОЗОВА чĕнтĕмĕр. Мĕн шута илмелле малашнехи çĕр ĕçĕнче, çум курăкĕпе тата ўсен-тăран сăтăрçисемпе, чир-чĕрпе мĕнле препаратсемпе кĕрешмелле? Ку ĕçсене хăш вăхăтра ирттермелле? Çак ыйтусем тавра ирттертĕмĕр эпир хамăр калаçава.

– Виталий Пименович, хирте ака-суха ĕçĕсем вĕçленнĕ май акнă-лартнă культурăсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ўстересси мала тухать. Ку çĕр ĕçченĕшĕн яланхи йăла ĕнтĕ, çапла вĕт?

– Яланхи ĕç пулнине пĕлетпĕр пулсан та акаран кĕрсенех тепĕр чух ун пирки манса каятпăр. Кайран вара çум айне пулнă, сăтăрçăсемпе чир-чĕр тухăça палăрмалла пĕчĕклетнĕ хирсенче, ытарлă каласан, «суя вырма» ирттеретпĕр. Ăна валли хаклă техника туянатпăр, пуррине юсатпăр, сĕрмелли-çунтармалли материалсене тăккалатпăр, ĕç укçи тўлетпĕр, анчах вăхăт иртсен хамăр ĕç тунă тăкаксене саплаштарманнинчен «тĕлĕнетпĕр», хĕл варринче выльăх валли тырă шырама пуçлатпăр. Каллех тăкаксем – ăçта кунта мал туртăмлă аталанма вырăнĕ? Çак суя çултан пăрăнас тĕллевпе паянах акнă-лартнă культурăсене тĕрĕс-тĕкел ўстерес тесе çанă тавăрса ĕçе кўлĕнмелле. Çумран, хурт-кăпшанкăсемпе, ўсен-тăран чирĕсенчен паян эпир химилле тата биологилле препаратсемсĕр тухăçлă хўтĕленейместпĕр. Вĕсемпе ĕçлессин те кашнин хăйĕн вăхăчĕ. Çакна çеç калатăп, ку ĕçре чи хаклă препаратсемпе усă курсан та тăкаксем гектартан 2 центнер тырă ытларах туса илсен саплашăнаççĕ. Çавăнпа та гербицидсемпе, фунгицидсемпе, инцектицидсемпе тата биологиллĕ препаратсемпе вăхăтра ĕçлени хуçалăх экономикине пуянлатать кăна.

– Хăшĕсемпе, ăçта, хăçан, мĕнле усă курни вырăнлăрах?

– Малтанах кĕрхи культурăсем çинче чарăнса тăрар. Вĕсем тунана каяс шая аталанса çитрĕç ĕнтĕ. Вĕсем çинче паян çемçерех химилле препаратсемпе усă курни вырăнлă. Кун пеккисем çаксем: «Гранстар», «Прима». Ĕçленĕ чухне вĕсене «Кристалон», «Планриз» тата «Псевдобактерин-2» препаратсемпе хутăштарса усă курни вырăнлă. «Кристалон-ра» макро-, микроудобренисем пур. Вĕсем çулçă витĕр ўсен-тăрана кĕреççĕ, вăйлă аталанма пулăшаççĕ, пĕрле усă куракан химилле препаратсен наркăмăшлăхне пĕтереççĕ. «Планриз» тата «Псевдобактерин-2» препаратсем антидепрессант пулнипе пĕрлех ўсен-тăрансене ўсме пулăшакан стимуляторсем.

Çуртрисем çинче имçамсемпе тыр-пул культури сарăлнă вăхăтра усă курмалла. Çакна валли çўлерех асăннă препаратсемех каяççĕ. Вĕсемпе усă курса çуртрисем çине «Гранстар-Кросс», «Гранстар-Лорен», «Прима-Магнум», «Банвел-Логран» хутăшсем туса сапни çумпа тата сăтăрçăсемпе ăнăçлă кĕрешме май парать. Асăннă хутăшсене хире сапнă чух пĕрле «Кристалон» препаратпа усă курни ĕç пахалăхне ўстерет кăна.

– Шăрăх çанталăкра тырпул çинче сăтăрçăсем анлă вăй илеççĕ. Вĕсемпе кĕрешме хăйĕн методики пур-тăр?

– Паллах. Курăк пыйтипе трипсысем – шăрăх çанталăкра тыр-пула пысăк сиен кўрекен турт-кăпшанкăсем. Вĕсем пĕлтĕр тырă калчи ўссе пучаха ларнă вăхăтра пысăк сиен кўчĕç, пучах тăрринчи 4-5 пĕрчĕне пĕтерсе тыр-пул тухăçне самай пĕчĕклетрĕç. Манмалла мар, ўсен-тăранăн ўсĕм тапхăрĕнче шурă янкар, ўсен-тăран тутăхĕ, септориоз чирĕсем тухăça 30 процент таран чакарма-пĕтерме пултараççĕ. Кăçалхи шăрăх çанталăкра тата хăш-пĕр тыр-пул уйĕсене хĕрес пăрçасем (крестоцветные блошки) тапăнса сиен кўме те ĕлкĕрчĕç. Вĕсемпе кĕрешме, çак сăтăрçăсене малалла аталанасран чарма инсектицидсемпе, «Сочва, Ж» препаратпа усă курмалла. «Сочва, Ж» препаратпа «Герой» хуçалăх усă курма ĕлкĕрчĕ те ĕнтĕ. Чирсемпе кĕрешме калчасем пучаха кайиччен «Колосаль» тата «Альто-супер» препаратсемпе усă курмалла. Çак препаратсене ытти семпе пĕрле усă курни перекетлĕхе ўстерет кăна.

– Çĕр улмине тĕрлĕ чирчĕртен сыхласа хăварасси – кашни ял çыннине пырса тивекен ыйту.

– Çапла, кунта та вăхăтра татса памалли ыйтусем нумай. Тĕслĕхрен, çĕр улмине лартнă хыççăн çум курăкĕ шурă çип фазине лариччен агротехнологипе килĕшўллĕн 5-7 куртан анана сўрелемелле. Хыççăн та çĕр улми кассисене чĕрсе кăпкалатса тăни çум курăкне пуç çĕклеме памасть. Çумпа химилле майпа кĕрешмелли лайăх препаратсем «Ганстар» (ăна çĕр улми шăтиччен сапмалла), «Лазурит», «Титус», «Агритокс», «Гербитокс» (кусене вара çĕр улми шăтсан «Акварин» микроудобренипе, «Планриз» тата «Псевдобактерин-2» биологиллĕ препаратсемпе хутăштарса усă курмалла).

Пурне те хумхантараканни – çĕр улми çинчи фитофтора. Çак чиртен ял çыннисене тата çĕр ĕçченне «Метаксил», «Ридомил Голд», «Танос» системлă препаратсем, «Ордан» тата «Браво» контактлă препаратсем, «Планриз» тата «Псевдобактерин-2» биологиллĕ препаратсем ăнăçлă хўтĕлеççĕ.

– Виталий Пименович, çу кунĕн пĕр пайне ял çынни çĕр улми пуссинче колорадо нăррипе кĕрешсе ирттерет. Çак сăтăрçăпа ăнăçлă кĕрешме мĕн сĕнетĕр?

– Кунта «Актара», «Моспилан», «Конфидор», «Танрек» т. ыт. препаратсемпе усă курмалла. Кам килти хушма хуçалăхра пыл хурчĕ тытать, унăн пыл хурчĕсемшĕн наркăмăшлă мар «Моспилан» препарата çул памалла.

Çакăнтах манăн «Сочва, Ж» препарат çинче чарăнса тăрас килет. Унпа ял хуçалăх производство кооперативĕсенчи пекех килти хушма хуçалăхра та усă курма вырăнлă. Тĕтĕм шăршиллĕ препарат сăтăрçăсене ял хуçалăх культурисен лаптăкĕнчен хăваласа ярать. Çак препаратăн тĕп эффекчĕ – вăл сăтăрçăсене ўсен-тăран çинче тĕпленме май паманни. Химилле хушăмсемсĕр хатĕрленĕ тĕтĕм ароматизаторлă препаратпа усă курнă чух çыншăн хăрушлăх çук. «Сочва, Ж» препаратпа тырă-пулă пуссисенче те, çĕр улми анисенче те, пан улми пахчинче те, купăстапа сухан тата кишĕрпе помидор йăранĕсем çинче те ним хăрамасăрах усă курма юрать.

Халĕ тата маларах асăннă препаратсене тата ыттисене те эсир «Россельхозцентртан» (унăн пирĕн районти филиалĕ Муркашри вăрлăх инспекцийĕн çуртĕнче вырнаçнă), «Сингента», «Позитив» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсенчен, Вăрнарти хутăш препаратсен заводĕнчен туянма пултаратăр.

Мĕнех, акнă-лартнă культурăсене çум айне хăвармасан, тĕрлĕ чир-чĕрпе сăтăрçăсенчен агротехнологие пăхăнса хўтĕлесе хăварсан кĕркуннехи тухăç кашнинех савăнтарĕ.

А. БЕЛОВ калаçнă.

Районти прокуратурăран

Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

Паянхи кăларăма район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ Эдуард СОКРАШКИН тата прокуратура çумĕнчи следстви комитечĕн следователĕ Ленар ДАВЛЕТШИН ертсе пыраççĕ.

Тĕрĕслеврен юлмаççĕ

Прокуратура ĕçченĕсем пур çĕре те çитме тăрăшаççĕ. Ку лайăх-ха, анчах депутатсен районти Пухăвĕн йышăнăвĕсем вĕсемшĕн мĕнле вырăн йышăнаççĕ? Çакăн пирки Э. Сокрашкин аслă пулăшакан мĕн шутлать?

С. ВАСИЛЬКОВА.

Вулавçăсем пирĕн ĕçпе кăсăклансах тăни аван. Çакă пире районта пурăнакансем тата тĕрлĕ шайри влаç тытăмĕсем саккуна пăхăнса ĕçленине çирĕпрех пăхса тăма ыйтать. Çав шутра эпир депутатсен районти Пухăвĕн ĕç-хĕлне те куçран вĕçертместпĕр. Кунти йышăнусем саккунпа килĕшсе тăни халăх пурнăçĕпе çыхăннă.

Нумаях пулмасть эпир депутатсен районти Пухăвĕн «Депутатсен районти Пухăвĕн 2002 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнчи «Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчи пурăнмалли мар çуртсемпе пўлĕмсене арендăна памалли йĕрке çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен» йышăну проектне (малалла – Проект) тĕрĕсленĕ чух саккуна хирĕçлекен пулăмсене тата коррупци факторĕсене тупса палăртрăмăр.

Тĕслĕхрен, Проектпа килĕшўллĕ кĕртекен улшăнусенче 6.1 пунктра Арендаторсем арендăна илнĕ пўлĕме е çурта Пай килĕшсен субарендăна пама пултараççĕ.

Çавăн чухне «Конкуренци хўтĕлесси çинчен» Федераллă Саккунра пăхнă пек проектра пурлăха хăçан конкурс ирттермесĕрех субарендăна пама юрани тата хăçан ăна обязательнăй майпа ирттермелли çинчен каламан. Асăннă Саккунăн 17.1 статйин 4-мĕш пайĕнче пўлĕмсене е çуртсене арендăна илнĕ çын вĕсене виççĕмĕш çынсене хуçи килĕшнипе конкурссем е аукционсем ирттермесĕрех пама пултарать. Кун пек чух субарендăна панă лаптăк пĕтĕмĕшле лаптăкăн 10 процентĕнчен иртмелле мар, анчах 20 тăваткал метртан ытларах пулмалла. Субарендăна паракан лаптăк пĕтĕмĕшле калăпăшăн 10 процентĕнчен тата 20 тăваткал метртан иртсен обязательнăй йĕркепе конкурс е аукцион ирттермелле.

Çавăнпа та право актĕнче субаренда килĕшĕвĕ тума аукцион е конкурс ирттерессине пăхса хăвармалла. Çак процедурăсене ирттерессинчен пăрăнни коррупцие аталанма пулăшакан фактор шутланать.

Çаксене шута илсе эпир пăхса тухнă проектра ăна харпăр хăй интересĕсемпе усă курмалли çулсем пур. Ку вара коррупци вăй илесси патне илсе пыма пултарать.

Виçĕ çуллăха ирĕкрен хăтарчĕç

Çулталăк пуçламăшĕнче Мăн Сĕнтĕрте «Гастроном» магазин тĕлĕнче пĕр ўсĕр арçын милици ĕçченĕсем çине алă çĕкленине асăрхама тўр килчĕ. Пĕлес килет, кам пулчĕ вăл тата саккун умĕнче çав «паттăр» ответ тытрĕши?

М. СОКОЛОВ.

Вулавçă ыйтăвне те, пăшăрханăвне те ăнланатпăр. Çавăнпа та пирĕн ку ыйту тĕлĕшпе хуравĕ те хатĕр.

Йĕрке хуралçисем тĕлĕшпе саккуна пăсаканни вăл – 22 çулхи Шупашкар каччи А. Старшов. Саккуна пăсассинчен унччен те «хăраманскерне» Шупашкарти Ленин район сучĕ Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 318 статйин 1-мĕш пайĕпе икĕ çуллăха тĕрĕсленмелле условнăй майпа ответ тыттарнăччĕ. Анчах А. Старшов йĕркеллĕ пурăнасси пирки шутламан та курăнать. Январĕн 26-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрти «Гастроном» патĕнче автомашинăра ўсĕр лараканскерне тĕрĕслеме тăрсан йĕрке хуралçисем çине алă çĕклет.

Район сучĕ кăçалхи апрелĕн 13-мĕшĕнче А. Старшова 3 çуллăха колони-поселение яма приговор кăларчĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсен ертўçисен канашлăвĕнчен

Пĕтĕм ĕçе вăхăтра тумалла

(Вĕçĕ. пуçл. 1-мĕш стр.).

Çивĕч ыйтусенчен тепри вăл – усă курман çĕрсемпе усă курасси. Пĕтĕмпе кăçал 1400 гектар çакнашкал лаптăка ĕçе ямалла. Çак тĕллевпе республика тата район бюджечĕсенчен 984 пин тенкĕ уйăрнă.

Çĕртме пуссисем çинчен те манса каймалла мар. Вĕсем çине органикăллă удобренисем кăларса, тăпра пулăхлăхне хăпартассипе ĕçлемелле.

Александр Ильич çавăн пекех симĕс ĕç çине ăнăçлă ирттермелли хатĕрленў ĕçĕсене те вăхăтра пурнăçламаллине палăртрĕ.

Канашлура район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертўçи В.А. Калинин кашни хуçалăхăн умри тĕллевсене вăхăтра пурнăçламаллине палăртрĕ. Çакă районти пĕтĕмĕшле лару-тăру çине витĕм кўрет. Калчасем мĕнле шăтса тухнине вара июнĕн 1-мĕшĕнче пăхса тухаççĕ. Кăçал та уйсене 2 маршурутпа тухса тишкереççĕ.

Канашлура районти «Акатуй» уявне июнĕн 5-мĕшĕнче ирттерессине палăртрĕç. Унччен вара ку уява вырăнсенче йĕркелемелле.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе улăха кăларас ыйтăва та тишкерчĕç канашлура. Ял хуçалăх пайĕн тĕп зоотехникĕ Т.А. Алексеева пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра районта кашни ĕнерен вăтамран 13,5 килограмм сĕт сăваççĕ. Ку вăл иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 1,5 килограмм нумайрах. Сăвăм уйрăмах Суворов, Ильич яч. хис., «Герой», «Оринино» хуçалăхсенче пысăк. Хăш-пĕр хуçалăхсенче кĕтўсем уя тухрĕç ĕнтĕ. Пĕтĕмĕшле вара хуçалăхсенчи кĕтўсене майăн 26-мĕшĕнчен кая юлмасăр кăлармалла. Татьяна Александровна унччен вырăнти специалистсен выльăх тухмалли, шыв ĕçмелли вырăнсене палăртмалли, вĕсене тишкермелли çинчен те каларĕ. Фермăсенче выльăх рационне утăпа улăм кĕртмелли, тăвара нормăран 2 хут ытларах памалли çинчен аса илтерчĕ. Халĕ пур хуçалăхсенче те кĕтўçĕсемпе ĕç килĕшĕвĕ тăваççĕ.

Канашлура çавăн пекех çĕрпе çыхăннă ыйтусене те тишкерчĕç.

Л.ПАВЛОВА.

ОБЪЯВЛЕНИЕ

Управление капитального строительства, архитектуры и ЖКХ администрации Моргаушского района, находящееся по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, каб. 207 объявляет о проведении конкурсного отбора на перевозку пассажиров по следующему автобусному маршруту:

- Моргауши- Юськасы (через Нижние Панклеи)- 19 км.

Для участия в конкурсном отборе допускаются юридические и физические лица, зарегистрированные в качестве индивидуальных предпринимателей своевременно представившие конкурсную заявку, надлежащим образом оформленные документы, а также выполнившие все требования, предусмотренные условиями конкурса.

Для участия в конкурсе претенденты подают конкурсную заявку, запечатанную в конверт, представляющую собой комплект следующих документов:

заявку на участие в конкурсе;

сведения об имеющемся опыте;

копии учредительных документов и документа о государственной регистрации - для юридических лиц и ИП;

копии бухгалтерской отчетности за предыдущий год и истекший квартал текущего года;

подтверждение территориального органа Федеральной налоговой службы по месту государственной регистрации претендента об отсутствии просроченной задолженности по платежам в бюджет и внебюджетные фонды, в том числе по штрафам и финансовым санкциям;

подтверждение финансового отдела администрации Моргаушского района об отсутствии просроченной задолженности по ранее предоставленным бюджетным кредитам;

копия лицензии на осуществление перевозок;

сведения о наличии транспортного средства не менее 2-х на маршруте.

Указанные документы скрепляются подписью и печатью претендента.

Весь пакет документов представляются не позднее 21 июня 2010 г. в УКС, архитектуры и ЖКХ администрации Моргаушского района каб. 207 по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, тел. 62-4-39, контактное лицо по приему заявок Звонков Н.Л.

Конкурс состоится 22 июня 2010 года в 11.00 часов в каб. 206 администрации района.

Кашмашри «Восток» магазинта пĕри енчĕк пăрахса хăварнă. Укçи те пур. Хуçине пырса илме ыйтатпăр.

01 пĕлтерет, асăрхаттарать

Халăх тăрăшни пулăшрĕ

Ирĕке кайнă вут-çулăмпа пĕччен кĕрешме çуккине пирĕнтен кашниех лайăх ăнланать. Апла пулин те пушар тухсан ял халăхĕ пушар сўнтерме, сиксе тухнă инкекпе кĕрешме васкаманни тарăхтарать. Çапах эпир хамăр тивĕçе пурнăçлатпăр. Кайран шутлатăн та çынсем те пĕр çын пек пулса вут-çулăмпа кĕрешнĕ пулсан инкек виçи самай пĕчĕк пулмаллаччĕ, анчах... Иртсе кайсан шыв сапнин усси çук.

Çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче 8 сехет те 22 минутра Мăн Шаптакра С. Иванов хуçалăхĕнчи мунчара «хĕрлĕ автан» хуçаланма пуçласан ăна курнă ял çыннисем алă усманни ырă шухăшсем çуратрĕ. Вĕсем хăйсем тăрăшнипех пушара çăварлăхлама пултарнă. Эпир çитсен пушарта çунса пĕтмен йывăç материалсене шыв сапса ислетрĕмĕр çеç.

Мунчапа юнашарах утă тултарнă сарай пулни тата пушарта ун çине витнĕ резин шифер ирĕлме пуçлани те хăрушлăх самай пысăкланма пултарни пирки калать. Ял çыннисем пуç усманни, çулăмпа алă усмасăр кĕрешни пысăкрах инкеке сирсе ячĕ.

Çапла паллă пулса юлчĕ кăçалхи 15-мĕш пушар.

К. ПОПОВ,
патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн инспекторĕ.